Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* | 101 N (4670) | *1998 çулхи сентябрь (авăн) уйăхĕн 5-мĕшĕ, шăматкун* | *Палăртнă хакпа.*

## Нурлатри искусствăсен шкулĕ

Тума тытăннăранпа виçĕ çул çитиччене хермен евĕрлĕ, питĕ хитре шкул ӳссе ларасси çинчен никам та шухăшламан. Тĕрĕсрех каласан, шухăшланă, ĕмĕтленнĕ. Анчах та çак ĕмĕт Ф.Х.Мухаметшин тулăшнипе пурнăçланнине пытарма çук. Тутарстан Республикин Патшалăх Канашне Нурлат суйлав округĕ тăрăх суйланă депутат (çав вăхăтра вăл ТР Премьер-министрĕ) Фарид Хайруллович тăрăшни питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ, вăл çак объекта тăвассине плана кĕртнĕ, ăна хăпартассине пĕр вĕçĕмсĕр финансласа тăнă, ку объектра ĕçсем мĕнле пынине яланах тĕрĕсленĕ, кирлĕ пулсан вара, хăшне-пĕрне вăрçса та илнĕ, çаплах çак объектри ытти чылай ыйтусене татса пама пулăшнă. Шкул çуртне тăвасси проектпа палăртнинчен чылай хакла ларнă, Фарид Хайруллович ку ыйтăва та татса панă. Музыка инструменчĕсем, оборудовани туянма 750 пин тенкĕ кирлĕ пулнă, ку ыйтăва та депутата татса пама тӳр килнĕ. Çавăнпа та, искусствăсен шкулне уçнă çĕрте Ф.Х.Мухаметшин хисеплĕ хăна, суйлавçăсен умĕнче хăйĕн сăмахне тытнă депутат кăна мар, çак шкула уçнăшăн чун-чĕререн савăнакан çынсенчен пĕри пулчĕ пулĕ. Вĕсенчен иккĕмĕшĕ, паллах ĕнтĕ, район администрацийĕн пуçлăхĕ Ф.С.Сибагатуллин. Районти пĕрремĕш çын, хăй Фарид Хайрулловичпа пĕрле çак объекта тăвакан строительсемпе, шкул ертӳçипе кашни вак-тĕвек ĕçе пĕрле сӳтсе явса пурнăçлама тăрăшнă. Çакăн пек савăнăç мĕнле хакла ларнине вĕсем хăйсем кăна пĕлеççĕ. Çавăнпа та тухса калаçнă чухне вăл Нурлатра пурăнакансене Пĕлӳ кунĕпе саламласа, вĕсен ятĕнчен вăл сентябрĕн 1-мĕшĕ Нурлатсемшĕн икĕ хут уяв пулнăшăн Ф.Х.Мухаметшина тав турĕ. Фарид Хайруллович район малашлăха çирĕп шанса пурăннине палăртса, çак пысăк ĕçре ывăннине пĕлмесĕр тăрăшнисене тав турĕ. Вăл районти, республикăри вĕрентӳ ĕçченĕсене вĕсен тӳрĕ кăмăллă ĕçĕшĕн тав турĕ.

Уяв малалла пычĕ, пурте çĕнĕ шкул пысăк пĕлтерĕшлĕ пулни çинчен калаçрĕç. Çакă ТР Культура министрĕ М.М.Таишев тухса калаçнинче те уççăн палăрчĕ.

- Республикăри çакăн евĕрлĕ 122 шкул хушшинче сирĕнни чи пысăкки шутланать. Кунта пысăк тав туйăмĕпе килĕр те çакăнтан пĕлӳпе тухăр, - тесе вĕçлерĕ вăл хăйĕн сăмахне. "Татнефтепром" пĕрлешĕвĕн генеральнăй директорĕ Р.К.Зарипов, "Татспиртпром" производство пĕрлешĕвĕн генеральнăй директорĕ Р.Р.Шайхутдинов нурлатсене ăшшăн саламларĕç, шкула парнесем пачĕç. Искусствăсен шкулĕн директорĕ Т.С.Бадыгин та кăмăллăн тухса калаçрĕ. Ашшĕ-амăшĕсен ятĕнчен Г.В.Яруллина сăмах илчĕ. Культура ветеранĕшĕн К.В.Изотовашăн та сентябрĕн 1-мĕшĕ тахçанччен асра юлĕ. Ку шкулăн воспитанникĕсем шкул историне сăвăласа каласа панă хыççăн кашнин сăн-пичĕ ыра кулăпа çуталчĕ. Унтан вара 547-мĕш куçса çӳрекен механизациленĕ колонна мастерĕ Ф.М.Мингалимов çĕнĕ хуçасене символлă çăра уççи пачĕ, пĕрремĕш кунри пекех, шкула ялан тирпейлĕ тытма чĕнсе каларĕ. Кун пек тума ун чăнах та ирĕк пур. Мĕншĕн тесен хăйсен ĕçне, çав шутра капăрлатассине те, питĕ лайăх пурнăçланă.









(Вĕçĕ 4-мĕш стр.).

## Сентябрĕн 6-мĕшĕ - Нефтьпе газ промышленноçĕнче ĕçлекенсен кунĕ

*Хисеплĕ нефтяниксем! Эпĕ сире професси уявĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп, сирĕн çăмăл мар, анчах та пурне те кирлĕ ĕçĕрте эпĕ сире чăтăмлăх тата шанăç сунатăп. Çак кун çаплах Ромашкинори нефтьпе пуян вырăнта нефть кăларма тытăннăранпа 50 çул çитнипе те паллă. Çак вăхăт хушшинче Тутарстан нефтяникĕсем çĕр айĕнчен темиçе миллиард тонна "хура ылтăн" кăларса çĕршыв экономикине аталантарассине тата çирĕплетессине пысăк тӳпе кĕртнĕ. Халь, нефть рынокĕнчи йывăр условисене пăхмасăр, эсир хăвăр умăра тăратнă производство программине пурнăçлас тесе ырми-канми ĕçлетĕр, ĕç вахтине малалла чыслăн илсе пыратăр. Пирĕн район территорийĕнче нефтьпе газ кăларакан çĕнĕ управлени тата нефть ĕçлесе хатĕрлекен çĕнĕ завод туни унăн бази хула тата район экономикине çирĕплетме пулăшĕ, Нурлат сăн-сăпатне тĕпрен улăштарассинче пысăк тӳпе кĕртнĕ нефтяниксем вара малашне те пирĕн тĕрек тата шанăç пулĕç. Эсир, хальхи йывăр условисенче те хăвăрăн ĕçĕре парăннăскерсем, малашне те хăвăрăн умăрта тăракан задачăсене ăнăçлă пурнăçласса шанас килет. Эпĕ сире çирĕп сывлăх, телей, шанăç сунатăп.*

*Ф.С.СИБАГАТУЛЛИН,*
*Халăх депутачĕсен пĕрлештернĕ Совечĕн председателĕ, хулапа район администрацийĕн пуçлăхĕ.*

## Тĕлпулу вырăнĕ - больница

**Кĕçнерникун, сентябрĕн 3-мĕшĕнче хулапа район администрацийĕн пуçлăхĕ, Тутарстан Республикин Патшалăх Канашĕн халăх депутачĕ Ф.С.СИБАГАТУЛЛИН медицина ĕçченĕсемпе тĕл пулчĕ.**

- Врачсемпе тĕл пулса йывăрлăхсене сӳтсе явас кăмăл тахçанах пур. Анчах та тĕрлĕ сăлтавсене пула ку калаçу ялан юлса пычĕ, - çапла пуçларĕ хăйĕн сăмахне пуçлăх. Хальхи вăхăтра лару-тăру питĕ кăткăс, Раççейри финанспа экономика йывăрлăхĕсем республикăри, районти пурнăçа тата та йывăрлатрĕç, терĕ вăл, унтан çак ыйту тĕлĕшпе хăйĕн шухăшне пĕлтерчĕ. Çаплах вăл ял хуçалăхри, хулари предприятисенчи ĕçсем çинчен каласа пачĕ. Унта та лару-тăру йывăр. Ĕç кунсерен чакать, çавăнпа та бюджета укçа сахал кĕрет, çавна пула бюджетниксене ĕç укçи вăхăтлă параймаççĕ. Лару-тăру тата та йывăрланма пултарать, хаксем ӳсĕç, хăть мĕнле вăхăт тĕлне те хатĕр пулмалла, терĕ Ф.С.Сибагатуллин. Вăл тухса калаçнă сăмахсенче лайăххи те пурччĕ ĕнтĕ. Тĕслĕхрен, сахăр кăшманĕн тухăçĕ лайăх пуласса шанни, Зузеевăри нефть промысли НГДУ статусне илни тата ытти те. Çаксем пурте район пурнăçĕнче лайăх енчен палăрĕç.

-Хальхинчен йывăртарах вăхăтсем пулнине те астăватăп-ха, анчах та çынсем пуçĕсене усмарĕç, малашлăх лайăх пуласса шанчĕç, сахаллишĕн те савăнма пĕлетчĕç. Халь вара çынсем шанăçа çухатнă,- терĕ Фатих Саубанович. Шурă халатлă çынсем халăхăн моральпе ăстăн туйăмне ӳстерессинче пысăк вырăн йышăннине палăртса вĕсене çак йывăр вăхăтра пулăшма чĕнсе каларĕ.

Медицина ĕçченĕсен халь хăйсен те йывăрлăхсем чылай.

Чи çивĕччисенчен пĕри - хваттер ыйтăвĕ, командировкăсенче пулнăшăн памалли укçана çулталăк ытла тӳлеменни. Вĕсем çинче тĕп врач А.А.Клементьев чарăнса тăчĕ. Профком председателĕ Н.Лисюков каланă тăрăх, сывлăх сиплевĕнчи реформа хыççăн районсенчи медицина учрежденийĕсенче 135 койка-вырăн чакма пултарать, çавăнпа та вăл пуçлăха çак ыйтăва татса пама пулăшма ыйтрĕ.

Ф.С.Сибагатуллин больница ертӳçисем çĕнĕ формăсемпе усă курас тĕлĕшпе хытăрах ыйтсан çак ыйтусене татса парасса шанни çинчен пĕлтерчĕ.

**Ф.ГАЛИМОВА.**

# Уяв ячĕпе сире, хисеплĕ нефтяниксем!

## Пĕрремĕш рабочи

Чăнах та, вăл 12 çул каялла Зузеевăри промыслана, Зузеевăран инçех мар пушă вырăнти вагончикран пуçланнăскере, килнĕ ĕçĕ яваплă, кунта пысăк пĕлÿ те, дисциплина та кирлĕ. Çакăншăн чи малтан бригадир яваплă. Кĕтменлĕхсем сиксе тухсан ĕçе чи малтан Долгова чĕнеççĕ - çывăхра, Мамăкра кăна пурăнни аван. Мĕн каласан та, хальхи вăхăтра промыслара 70 скважина ĕçлет, çавăнпа та ĕç нумай.



чухне организацире пĕр çын çеç пулнă - Ф.И.Галимов начальник. Унччен Владимир Николаевич Мамăкри кирпĕч заводĕнче ĕçленĕ, ятарлă пĕлÿ суккине те пытарман, ĕçлес тата вĕренес кăмăл пуррине кăна пĕятернĕ. Çапла вара, В.Н.Долгов Зузеевăри промыслара пĕрремĕш рабочи пулса тăнă, малашне те çавăнтах ĕçлеме шутлать. Долгов нефтяник профессине алла илнĕ, тата мĕнлерех-ха! База патĕнчи 916-мĕш номерлĕ станок-качалка ĕçленĕ çĕрте пĕрремĕш хăнăхусем илнĕ, вăл халĕ те уншăн хаклă. Ун чухне кунта тĕп инженер пулса ĕçленĕ В.П.Воронцов пĕрремĕш рабочисене нумай вĕрентнĕ. Теори пĕлĕвĕсене вĕсем НГДУн вĕренÿпе курс комбинатĕнче туяннă. Долгов çăмăл алăллă иккен: çĕнĕ организаци йĕркеленсе çитнĕ, рабочисем пурте тенĕ пекех Владимир Николаевичран вĕреннĕ, вăл ертсе пынипе професси вăрттăнлăхĕсене алла илнĕ. Владимир темиçе çул аслă оператор пулса ĕçленĕ, кăçал вара ăна бригадир пулма шаннă. Ку вара ахальтен мар.

- Долгов кашни скважинăн мĕнпур параметрне питĕ лайăх пĕлет, хăйĕн ĕçне пысăк яваплăх туйса пурнăçлать. Çынсемпе те килĕштерет, çав вăхăтрах çирĕп ыйтать, - тет ун çинчен промыслан профсоюз комитечĕн председателĕ Н.П.Липатов. Операторсем те Владимир Николаевич çинчен çаплах шутлаççĕ. Вĕсем хăйсен бригадирĕ çинчен лайăххине сахал мар каласа пама пултараççĕ.

Оператор профессийĕ - нефть отраслĕнче чи кирлисенчен пĕри. Вăл нефть уçлать, станок-качалкăсене, çĕр çинчи оборудованисене тивĕçтерет. Техники кăткăс,

Владимир Николаевич хăйĕн бригадипе кăмăллă, тÿрĕ кăмăллисен, хăйсен ĕçне лайăх пĕлекенсен ячĕсене асăнать. Тĕслĕхрен, Сергей Белогубов, професси енĕпе те начар мар, шанчăклă юлташ та. Евгений Глебов вара икĕ çул ĕнтĕ Татнефтепром пĕрлешĕвĕнчи професси ăсталăхĕн конкурсĕнче пĕрремĕш вырăн йышăнать. Нефть техникумĕнчен вĕренсе тухнă М.Гайсина та кунта шанаççĕ. Кĕскен каласан, бригада членĕсем 18-шĕ те - обходчиксем те, нефть кăларакан операторсем те бригадиршăн кашни хăйне евĕрлĕ çывăх. Хăй те, кунта професси туяннипе пулĕ, унăн вăрттăнлăхĕсене кашни çĕнĕ ĕçчене вĕрентме тăрăшать. Çын хăйĕн пурнăçне нефть кăларма халалланă пулсан вăл нумай пĕлмелле, ĕçлемелле тата ялан вĕренмелле, тесе шутлать бригадир. Хăй тăрăшнин кăтартăвĕсене курсан вăл чун-чĕререн савăнать. Вăхăт мĕнле улшăнсан та нефтяник профессийĕ питĕ хисеплĕ те кирлĕ тесе шутлать. Пĕр ялта пурăнакансем те ăна хисеплеççĕ. 12 çул ĕçленĕ вăхăтра вăл питĕ лайăх хваттер илнĕ. Мăшăрĕ те, Елена Николаевна кунта, промыслара вăй хурать. Кам пĕлет, тен, вĕсен икĕ ачи те ашшĕ çулĕпе кайĕç. Ун чухне вара Долговсен хушамачĕ коллективăн биографийĕнче çирĕп вырăн йышăнĕ. Ашшĕ вара куншăн кăмăллă çеç пулĕ. Нефть промыслин пĕрремĕш рабочийĕ В.Н.Долгов нефтяник профессине яланах чи интересли те кирли тесе шутлать.

**С.НУРУЛЛИНА.**

## Çирĕплĕхе тĕрĕслесе

Уяв уявах ĕнтĕ. Вăтăр виçĕ çул каярах пирĕн çĕршывра Нефтяниксен кунне çирĕплетнĕ. Ăна сентябрь уйăхĕн пĕрремĕш вырсарникунĕнче палăртаççĕ. Ку вăл мухтавлă та хăюллă çынсен ĕç хастарлăхĕн уявĕ.

Çак юлашки çулсенче нефтяниксем хăйсен Кунне пĕрремĕш хут питĕ йывăр лару-тăрура кĕтсе илеççĕ. Тулти тата шалти рынокра Расçейри нефть кампанийĕсен, çав шутра "Татнефть" акционер обществин те нефть хакĕ йÿнелни экономикăн чăн-чăн инкекĕ пулса тăчĕ. "Татнефть" акционер обществин финанспа экономика лару-тăрăвне унăн ертÿçисем питĕ йывăр тесе хак параççĕ. Акционер обществинче апрель уйăхĕнче экономика çирĕплетме чрезвычайллă мерăсем йышăнасси çинчен пĕлтернĕччĕ.



Нефтьпе газ кăларакан "Нурлатнефть" управлени ытти структура подразделенийĕсемпе пĕрле хуçалăх расчечĕн кăтартăвĕсен çирĕп йĕркинче тăрать. Мĕнпур енчен çирĕп дисциплина тата перекет - çакă предприяти ĕçне палăртать те. Пур тăкаксене те шута илнĕ - транспорт, электроэнерги, командировкăсем, капиталлă строительство. Пĕр тонна нефть уçлама тухакан тăкаксене чакарасси - çакăн пек тĕллев тăратнă нефть кăларакансем умне.

Мĕнпур йывăрлăхсене пăхмасăр, коллективра производство планĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе хĕрÿ ĕç пырать.

Управлени кăçалхи сакăр уйăхра 1022250 тонна нефть кăларнă, çав шутра нормăран ирттерсе - 16290 тонна. НГДУ ĕç территорийĕнчи предприятисемпе пĕрле 74307 тонна кăларнă.

Хальхи кăткăс условисене, ĕç тÿлевĕн сферинчи çирĕпмарлăха пăхмасăр, "Нурлатнефть" управленин коллективĕ кулленхи, лăпкă пурнăçпа пурăнать. Маларахри çулсенчи пекех, мĕнпур цехсемпе подразделенисем производствăпа экономика ăмăртăвне, производство культури тĕлĕшпе йĕркеленĕ смотр конкурса хутшăнчĕç. Комисси тĕрĕслевĕн результачĕсем çакна кăтартса пачĕç: цехсемпе участоксенчен чылайăшĕнче производство заданийĕсене пурнăçлассине пысăк тимлĕх уйăраççĕ, промышленность объекчĕсен территорийĕсене тирпей-илем кĕртес тата симĕслетес тĕлĕшпе пысăк ĕç ирттернĕ. Цехсен пĕрремĕш ушкăнĕнче малти вырăнсене çĕр сий пусăмне тытакан цех (начальникĕ Д.М.Бурганов) тата нефтьпе газ кăларакан 2-мĕш номерлĕ цех (Д.Г.Мухаметшин) йышăннă, иккĕмĕш ушкăнра - пăспа тата шывпа тивĕçтерекен цех (А.И.Сергеев).

Нефтьпе газ кăларакан 3-мĕш номерлĕ цех (начальникĕ Ф.Х.Садретдинов) тата технологи транспорчĕн управленийĕ (И.Г.Валиуллин) лайăх ĕçленине палăртнă.

Йăлана кĕнĕ тăрăх,çак уяв умĕн професси ăсталăхĕ енĕпе конкурссем, пушарпа прикладной спорт енĕпе ăмăртусем иртнĕ.

Кирек мĕнле ĕçре те ăсталăх ăнăçлăхсем тума пулăшать. Нефтьпе газ кăларакан "Нурлатнефть" управленин икĕ пинлĕ коллективĕнче çĕр-çĕр çын хăйсен ĕçĕн специалисчĕсем пулнипе чапа тухнă. Вĕсенчен чылайăшĕ ĕçре тивĕçлипех малта пыракансем шутланаççĕ. Çакна НГДУ администрацийĕпе профкомĕ нумаях пулмасть йышшăннă решени те çирĕплетет - нефть промышленноçĕнче нумай çул хушши тÿрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн, производствăра пысăк кăтартусем тунăшăн рабочисен пысăк ушкăнне - 88 çынна укçан преми парса хавхалантарнă. Ку наградăсем - "Татнефть" акционер обществин хисеплĕ нефтяникĕ", "Татнефть" акционер обществин Хисеп хăми çине кĕртни, акционер обществин тата НГДУн Хисеп грамотисем, "Çулталăкри чи лайăх ăстаçă", "Професси тĕшпе чи лайăх ĕçчен", "Чи лайăх рационализатор" ятсем, тав тунисем.

Уявсем çитеççĕ те иртсе каяççĕ. Пурнăç вара малалла пырать.

Нурлатри нефтьçĕсен коллективĕ хăйсене шанса панă задачăсене тивĕçлĕ пурнăçласса шанас килет.

Çак корреспонденцие вĕçленĕ май "Нурлатнефть" НГДУн начальникĕн М.М.Хузинăн сăмахĕсене илсе кăтартас тетĕп.

- Юлашки çулсенчи рынокри йĕркесĕрлĕх вăхăтĕнче, - тенĕ вăл управление ертсе пыракансен составĕн пĕр канашлăвĕнче, - эпир вăя çирĕплетсе ĕçлеме пултарас опыта сыхласа хăварма вĕрентĕмĕр, ку пире шанăç парать: мĕн пулсан та чăтса ирттеретпĕр. Эпир коллективăн тĕп никĕсне сыхласа хăварма пултартăмăр. Йывăрлăхсене тата ĕçри ăнăçлăхсене пĕрле чăтса ирттернипе пĕрлешнĕ пирĕн коллектив хальхи кăткăс вăхăтри тĕрĕслеве те ăнăçлă тытĕ.

**В.БУРАЙКИН.**

**Н.Квашнина ÿкерчĕкĕнче: 1998 çулта професси ăсталăхне тĕрĕслес тĕлĕшпе ирттернĕ конкурсра пĕрремĕш вырăн йышăннă 1-мĕш номерлĕ ЦДНГ ĕçченĕсем: Вячеслав Николаевич Сенькин, Владимир Васильевич Абрамов, Олег Николаевич Жирнов, Ринат Рашидович Садыков, Наиль Мингаязович Мухаметзянов.**

## Шанăça çухатмаççĕ

1949 çулхи ноябрĕн 25-мĕшĕнченпе - сăнавлă пăралу кантурне йĕркеленĕренпе - мĕн чухлĕ улшăну пулса иртнĕ. Çĕнĕ бригадăсем, цехсем йĕркеленĕ, çĕнĕ ятсем, çитĕнÿсем палăрнă, ыйтусем тухса тăнă.

Пирĕн коллектива вăрçă хыççăнхи йывăр çулсенче йĕркелекенсене яланах асра тытатпăр. Вĕсем çаксем: Социализмла Ĕç Геройĕ З.Т.Тимерзянов, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕн кавалерĕсем М.Г.Галимов, И.И.Гарифуллин, Ю.В.Полуян, С.Ш. Шаймухаметов, III степень Ĕçлĕх Мухтав орденĕн кавалерĕсем Р.А.Бурганов, И.В. Мингазов, И.М.Малайрэу, чылай медальсемпе наградăланă А.Г.Шутов, С.Х.Габдрахманов, Н.В.Коновалов тата ыттисем те - пурне те асăнса та пĕтереймĕн.

Коллектива кашни çулах çĕнĕ ĕçченсем хушăнаççĕ.

Чи пысăк пăралу цехĕсенчен пĕрне Л.И.Хаматов ертсе пырать. Пирĕн коллектива вăл 1984 çулта килнĕ. Вĕреннĕ, ĕçе хăнăхнă.

"Татнефть" АОн хисеплĕ нефтяникĕ, ТР тава тивĕçлĕ нефтяникĕ М.И.Хасаншин, В.Х.Алтынбаевпа А.Х.Мухутдинов пăралуçăсем тата ыттисем те хăйсен пĕлĕвĕпе тата опычĕпе ăста усă курса вăй хураççĕ.

АТЦ начальникĕ В.А.Показаньев, ВМЦ начальникĕ И.Н.Стручков, автокран машинисчĕ В.Х.Колышев, трактор кранĕн машинисчĕ С.Ш.Шакирзянов, С.А.Соколов пăралуçă, А.Ш.Мухутдинов электромонтер, Р.З.Хаматвалеев вышкомонтажник, В.И.Петрова штукатур-маляр тата ыттисем тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсенчен тĕслĕх илме пулать.

1997 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнченпе НУРБ сервис предприятийĕ вырăнĕнче шутланать. Кăçалхи уяв вара питĕ йывăр вăхăта тÿр килчĕ - çĕршывшăн та, коллектившăн та. Çапах та нефтяниксем пуçĕсене усмаççĕ. Кăçалхи 8 уйăх хушшинче ту породисене тĕпчес плана 111,1 процент пурнăçланă, çав шутра сăнассипе - 100 процент, пăралассипе - 111,9 процент. Заказчиксене 46 скважина панă, çакă 109,4 процент шутланать.

**Т.АХМЕТЗЯНОВА.**

# Музыкăна парăннăскер

***Çак профессие суйласа илме ăна ашшĕ-амăшĕ пулăшнă. Акă чылай çул хушши ĕнтĕ вăл ăна малалла аталантарать - халь хăйĕн вĕренекенĕсемпе пĕрле.***

**Хăйĕн календарĕнчи паллă дата**



Пурăннă пĕр хĕрача. Çемьере пурте музыкăна кăмăлланă, çавăнпа та ашшĕ ăна музыкăна вĕрентес тесе тăрăшнă. Анат Камăри музыка училищинчен вĕренсе тухнă хыççăн, 1973 çулхи август уйăхĕнче ачасен музыка шкулĕнче пĕрремĕш урок ирттерне те пăшăрханса ӳкнĕ: расписани хĕсĕк, мĕншĕн тесен тăватă класс кăна пулнă, вĕсем те Пионерсен çуртĕнче çеç... Акă çавăнтанпа 25 çул иртнĕ. Çак вăхăт хушшинче вара мĕн кăна пулса иртмен пулĕ: уроксем, вĕренĕве йĕркелесси тата тĕрĕслесси, ашшĕ-амăшĕсемпе калаçу ирттересси, зачетсемпе экзаменсем, ачасене вĕренме йышăнасси тата вĕренсе пĕтерне хыççăн уйăрласси, отчетлă концертсем, репетицисем, республикăри конкурссемпе фестивальсем, вĕренекенсен ăнăçлăхĕсемпе ăнăççăрлăхĕсем, çĕнĕ ятсем, шутсăр ыйтусемпе ĕçсем... Нурлатри музыка шкулĕн директорĕн вĕренӳ пайĕн заведующийĕ Люция Мухтаровна Гиззатуллина çаксем çинчен кĕскен çапла калать: "Мĕнпур пурнăç ĕçĕ". Йăлăхтарса çитерне сăмах, анчах та питĕ тĕрĕс, вăл хăйне питĕ телейлĕ тесе шутлать - искусствăн çĕнĕ çурчĕ питĕ илемлĕ те хăтлă. Ку темăпа вара Люция Мухтаровна кăмăлпах калаçать, вăл малашнехи çутă ĕмĕтпе пурăнать. Пысăк та çутă классем. Концерт залĕ. Вĕрсе каламалли инструментсен уйрăмне вĕренекенсем пуçтарасси пырать. Кларнет, флейта, саксофон, гобой... Интелектуаллă шай ӳсет, нивушлĕ пултараймĕ? Художество класĕ уçнă - ан тив, ачасем хăйсем шухăшласа кăларакан сăнарсене пир çине куçарса ӳкерме вĕренччĕр. Ташă класĕнче - тĕкĕрсем урайĕнчен тата балет станокĕсем. Хор класĕсенче хулари 1-мĕшпе 2-мĕш номерлĕ шкулсенчи "Сказкăри", "Камыр-Батырти" ачасем валли занятисем малалла пырĕç... Унта пĕчĕк ачасене çырăнтарнă чухне хăшĕ-пĕрин ашшĕ-амăшĕсем хирĕç пулнă, вĕсене вара çак занятисем ачасене воспитани парĕç тесе вăрахчен ĕнентерме тивнĕ, уйăхне 15 тенкĕ тӳлени пачах пысăк мар сумма. Пĕрремĕш концерта йыхăрсан кăна амăшĕсен пичĕсем савăнăçпа çиçнĕ: вĕсен ачисем ăста юрлама, оркестрта выляма тата итлеме вĕреннĕ, вĕсен сисĕмлĕхĕ те хушăннă...

Сăмах май, сисĕмлĕх çинчен. Люция Мухтаровна çак ăнланăва пысăк вырăн уйăрать тата преподавательшĕн вăл юлашки ĕç мар тесе шутлать: ученика ăнланма пĕлмелле: пĕрне мухтамалла, теприне хавхалантармалла, виççĕмĕшĕнчен ытларах ыйтмалла - вăл пултарать, тăваттăмĕшĕшĕн - кĕрешмелле. Тата класа кĕрсен хăвăн ыйтăвăсене, кăмăлтуйăм çитменлĕхĕсене манса каймалла.

Ĕçре вăл Софья Хуснулловна Сафина, Галина Владимировна Прокофьева тата Розалия Идрисовна Гайнанова опытлă педагогсем пулăшасса яланах шанать. Вĕсем ăнланни, хирĕçлеменни вара питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Хальхи вăхăтра вăл вĕрентнĕ ачасенчен чылайăшĕ унпа çумлă ĕçлеççĕ. Вĕсем вара малашне тата та пулĕç. Кăçал Лейсан Исхакова тата Катя Шугаева Альметьевскри музыка шкулĕн студенчĕсем пулса тăнă. Люция Мухтаровна вара çак хĕрачасене шаннă. Апла пулсан, вăл йăнăшман.

Хăйĕн класĕнче вĕренекенсене вара Люция Мухтаровна яланах пĕр канаш парать: "Ытларах ĕçлемелле, чăтăмлă пулмалла - унсăрăн нимĕн те пулмасть".

Вăл хăвăн кăмăлтуйăмна ху кăна çĕклеме пултарнине лайăх ăнланать. Çавăнпа та кунта ăнăççăрлăх пулсан вăл "Лунная соната" выляса хăйне лăплантарать. Çакă ăна пулăшнине вăл пытармасть. Тĕлĕнмелли çук. Музыка этеме чăн-чăн килĕшӳ, канăç кӳрет вĕт.

**Т.АЛЕКСЕЕВА.**

**Н. Азизов сăнӳкерчĕкĕ.**

# Пĕлтерӳсем

## Сутатпăр:

*Хула варринчи 2 пӳлĕмлĕ хваттер, 1995 çулта туса кăларнă "Нива", васкавлă. ГАИ патĕнчи СТОра ыйтса пĕлмелле, унти телефон: 5-16-40. Адрес: Гагарин урамĕ, 12-2, телефон: 2-16-19.*

* * *

*1990 çулта туса кăларнă ВАЗ-21083, хаклă мар, Киклĕ ялĕнче дача валли çурт. Телефон: 5-22-39.*

* * *

*Пахчаçăсен "Нaратлык" юлташлăхĕнче (Хуралту) дача участокĕ. Телефон: 2-13-28.*

* * *

*Рамăллă чӳрече блокĕсем, йӳнĕ. 4-мĕш номерлĕ шкулта ыйтса пĕлмелле.*

* * *

*Мрамор тĕпренчĕкĕсенчен тунă палăксем. 1-2 кун хушшинче çырса паратăп, хакĕ 450-550 тенкĕ. 1,2х0,6 калăпăшлă хура гранит (портретлă) хакĕ 2500-3000 тенкĕ. Адрес: Ленинградская урамĕ, 14. Свидетельство Б-324.*

* * *

*Некрасовка ялĕнче дача. Телефон: 5-22-81, 16 сехет хыççăн шăнкăравламалла.*

* * *

*Хула варринчи икĕ пӳлĕмлĕ хваттер (1-мĕш хут), телефон, сарай, гараж пур. Телефон: 2-17-57.*

* * *

*1990 çулта туса кăларнă лайăх шайри, шурă тĕслĕ ВАЗ-2106 автомашина, , двигателĕ 1600. Адрес: Çарăмсан районĕ, Ульяновка ялĕ, Станислав Ефремовран ыйтса пĕлмелле.*

* * *

*Кӳмеллĕ ИЖ-Планета-5 мотоцикл, мотоблок прицепĕ (лайăх шайра). Телефон: 5-36-50, хăть хăш вăхăтра та шăнкăравлама пулать.*

* * *

*Бассейн патĕнче дача. Телефон: 5-19-92.*

* * *

*Силикат кирпĕч тата газобетон, хаклă мар. Адрес: Якаел ялĕ, Л.Матюшкинаран ыйтмалла.*

* * *

*Çуна çинчи гараж. Адрес: К.Маркс урамĕ, 1-19.*

* * *

*1998 çулта туса кăларнă ВАЗ-2106. Телефон: 5-14-23.*

* * *

*Пахчаçăсен "Нарат" юлташлăхĕнче (элеватор) дача участокĕ, мансардăллă кирпĕч çурт, мунча, нӳхреп, 9 çулхи улма-çырла йывăççисем пур. Телефон: 2-19-13.*

* * *

*Хула варринчи 1 пӳлĕмлĕ хваттер, 1994 çулта туса кăларнă ВАЗ-21093, "йĕпе асфальт" тĕслĕ, сигнализаци, "Кенвуд" магнитофон пур е 2 пӳлĕмлĕ хваттерпе улăштаратпăр (сахăр завочĕпе чугун çул поселокĕсенчисене сĕнмелле мар). Адрес: Школьная урамĕ, 14-6, 19 сехет хыççăн ыйтса пĕлмелле.*

* * *

*Кĕпе-йĕм çумалли машина. Телефон: 5-27-15.*

* * *

*Ключи тата сахăр вĕретекенсен поселокĕнче дачă участокĕсем, йӳнĕ. Адрес: Ленин урамĕ, 28-1.*

## *ТĔРЛИ:*

*Лайăх строительсем çинчен информаци паратăп (тӳлевсĕр). Çуртсем, гаражсем, хуралтăсем лайăх тăваççĕ. Телефон: 5-16-25 (Назип).*

* * *

*Некрасовка ялĕнче венчет çĕррисемлĕ енчĕке тупакана çав ялти Файзуллина пырса пама ыйтатпăр. Парне пулать.*

## *ТАРА ПАРАТПĂР:*

*Кăрмăрши 1 пӳлĕмлĕ хваттер. Çулталăкшăн маларах тӳлемелле. Телефон: 5-16-74, 18 сехетрен тытăнса 21 сехетчен шăнкăравламалла.*

**Сентябрĕн 3-мĕшĕнче каçхине 21 сехетсенелле тасатакан сооруженисем патĕнче ӳт-пӳ енчен суранланнă 40-45 çулсенчи хĕрарăма тупнă. Йывăр суранланнине пула вăл больницăра вилсе кайнă. Çак факт тĕлĕшпе мĕн те пулин пĕлекенсене РОВД пĕлтерме ыйтатпăр. Телефонсем: 2-11-25 е 02.**

**Районта тухса тăракан "Туслăх" ("Дуслык", "Дружба") хаçат коллективĕ "Туслăх" хаçат редакторĕн Татьяна Ивановна Бурайкинан аппăшĕ ВАЛЕНТИНА ИВАНОВНА ЕРМИШКИНА вăхăтсăр вилсе кайнипе унпа, унăн çемйипе тата çывăх çыннисемпе пĕрле чун-чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.**

# Нурлатри искусствăсен шкулĕ

(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр.).

Унăн пахалăхĕ хуçасен пĕтĕм требованийĕсемпе килĕшсе тăтăр тесе тăрăшнă, вĕсен канашĕсене итленĕ. Çавăнпа чи лайăххисене - чи малтан мастера, Г.В.Овчинникова штукатур-маляра, И.Р.Галиев платнике, А.И.Салятдинов каменщика администраци пуçлăхĕ Хисеп грамотисемпе тата хаклă парнесемпе наградăларĕ.

Акă чи чаплă самант çитрĕ. Ф.Х.Мухаметшин тата Ф.С.Сибагатуллин хĕрлĕ хăйăва касрĕç, халăх шкула кĕчĕ. Вăл чăнах та хăйĕн чаплăлăхĕпе тĕлĕнтерчĕ: хитре илемлетнĕ пысăк пӳлĕмсем, çутă, анлă классем. Кусем пурте пурне те килĕшрĕç, çакă кăна та ачасен илемлĕх туйăмне çуратмалла. Занятисем валли уйрăм классем пăхса хăварнă, вĕсене те тивĕçлипе оборудованиленĕ. Кунта пианино кăна вуннă, тăватă рояль, вĕсенчен пĕрне, чи хаклă "Россия" рояле, пĕтĕм хальхи вăхăтри требованисене шута илсе оборудованиленĕ концерт залне лартнă. Залри пукансем вара мĕнлисем - пăхса ытараймăн, вĕсемшĕн 250 пин тенкĕ тӳленĕ.

Искусствăсен шкулĕ ачасене тата мĕнпе савăнтарĕ?

Ирĕк пулни сăнарлă искусствăсен уйрăмне уçса, унта 30 ача йышăнма, çаплах вĕрсе каламалли инстументсен, кларнет, гобой, саксофон, вĕрсе каламалли труба, флейта уйрăмне вĕренекенсем пуçтарма май парать. Кăçал икĕ хореографи класĕ ĕçлĕ - вĕсене ачасем йышăнаççĕ. Кĕскен каласан, вĕренекенсен шучĕ кăçал 200 ачана çитĕ.

Унтан хăнасем концерт залĕнче пĕрремĕш концерт курчĕç. Çак шкултан вĕренсе тухнă Н.Фадеева каланă кĕвĕ кашнин чунне хумхантарма, савăнтарма, тунсăхлаттарма пултарчĕ.

Ан тив, искусствăсен шкулĕ илемлĕх тĕнчинче кашнине хăйĕн çулне тупма, хăйĕн пултарулăхне палăртса аталантарма , обществăна кирлĕ анлă тавракурăмлă, йĕркеллĕ çын ӳстерме пулăштăр.

Ырă сехет тĕлне пултăр, шкул!

**С.ХАЙРУЛЛИНА.**

**Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.**

**Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ**

**Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.**

**ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.**

**ТЕЛЕФОНСЕМ:** редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

**Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.**

**Регистрациленĕ номерĕ 34.**

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 893. 3498